# СĂМАХĔСЕМ УН ТĔРĔС, СĔТЕКЛĔ ТЕ ИЛЕМЛĔ...

***Хветĕр Уяр çуралнăранпа 90 çул çитрĕ***



ФЕДОР Ермилович Афанасьев /Хветĕр Уяр/ чăваш литературинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçиччен палăрнă çыравçă. Пуян та кăсăклă унăн кун-çулĕ, нумай енлĕ те анлă пултарулăхĕ. Вăл – паллă калавçă, витĕр курăнлă çул çÿревçĕ, ăста куçаруçă, çивĕч чĕлхеллĕ сатирик, юморист.

Федор Афанасьев 1914 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче Самар облаçĕнчи Исаклă районне кĕрекен Сухари-Матак ялĕнче çуралнă. Хветĕрĕн ашшĕпе амăшĕ хут пĕлмен хресченсем пулнă. Апла пулин те Хветĕр пĕчĕкренех вĕренме ăнтăлнă. Ялти шкула пĕтерсен пулас çыравçă Самар хулинчи икĕ сыпăклă шкулта вĕренме пуçланă. Вăл вăхăтра Самар хули чăвашсемшĕн чăн-чăн культура вучахĕ пулса тăнă. Унта Нестер Янкас, Илле Тукташ çыравçăсем ĕçленĕ, Владимир Бараев, Стихван Шавли сăвăçсем çунат сарнă. Çак культурăпа литература вучахĕн хĕлхемĕсем Федор Афанасьев чĕрине те çулăм тивертнĕ. Вăл литературăпа интересленме тытăннă, хăйĕн пултарулăхне тăван сăмах вăйĕнче тĕрĕслесе пăхма шутланă.

1930 çулта "Капкăн" журналăн 17-мĕш номерĕнче унăн "Майне пĕлмесĕр" пĕрремĕш калавĕ пичетленсе тухнă. "Капкăн" редакторĕ Иван Мучи савăнăçлă хыпар пĕлтерсе çыру яни вунултă çулхи каччăна пушшех хавхалантарнă. Вăл калав хыççăн калав çырма пуçланă.

Хветĕр Уярăн канăççăр чунĕ ачаранах çул çÿрес, тĕнче курас ĕмĕтпе çунатланнă. Вăхăт нумай та иртмен, вăл Инçет Хĕвел тухăçне – Хабаровск хулине – çул тытнă. Çак хулари педагогика техникумĕнче, каярахпа Благовещенскри педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Пурнăçа лайăх пĕлмесĕр çыравçă пулма йывăррине Федор Афанасьев лайăх ăнланнă. Хăй Инçет Хĕвел тухăçĕнче пурăннă тапхăрта тĕрлĕ çĕрте ĕçлесе пăхнă: кăмака тунă, совхозра табельщикре ĕçленĕ, вырăс пăхнă. Çавăнпа та ĕнтĕ çыравçă хăйĕн калавĕсемпе очеркĕсенчи геройсен шухăш-ĕмĕтне туллин те тĕрĕс кăтартма пултарнă.

1936 çулта Федор Афанасьев Шупашкара куçса килнĕ, ĕмĕр тăршшĕпех кунта ĕçлесе пурăннă. Шкулта ачасене вĕрентнĕ, Чăваш радио комитетĕнче, "Капкăн" журнал редакцийĕнче вăй хунă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче фронтра пулнă. Паттăр çапăçнăшăн ăна медальсемпе орденсемпе наградăланă.

Вăрçăран йывăр аманса таврăнсан 1943 çулта Федор Афанасьева Чăваш патшалăх кĕнеке палатин /халĕ Пичет архивĕ/ ертÿçине лартнă. Калама çук йывăр вăхăтра ĕçлеме тивнĕ унăн. Кĕнеке палатин çав тапхăрта хăйĕн çурчĕ пулман. Вăл пĕчĕк путвалта вырнаçнă. Йĕпе, сивĕ тăнипе хаçат-журнал кăвакарнă. 1939 çулта çÿлтен тĕрĕс мар хушу панă пирки нумай кĕнекене унта-кунта салатса пĕтернĕ. Федор Ермилович вара чăваш халăх ăс-хакăл еткерне пĕр çĕре пуçтарса, упраса хăварас тесе нумай тăрăшнă. Çав вăхăтрах библиографи кăтартмăшĕсем, тĕрлĕ çулсен кĕнеке летопиçĕсем хатĕрлеме те пултарнă. Çырас ĕç те çак тапхăртах вăй илсе аталаннă.

Хветĕр Уяр хăйĕн чи малтанхи калавĕсене "Хв. Уй-хир" псевдонимпа пичетленĕ. Ку ăнсăртран пулман. Пĕчĕкрен уй-хир ĕçĕсемпе туслă хресчен ачи хăйне ĕç халăх ывăлĕ пек туйнă. Çырмашкăн та вăл халăхшăн çывăх та ăнланмалла жанртан – сатирăран – пуçланă. Унăн пирвайхи кулăшла калавĕсем "Майне пĕлмесĕр", "Суккăрсем валли", "Силос тăвакансем", "Çăл" пурнăçăн питĕ кирлĕ ыйтăвĕсене хускатнă.

Çыравçăн кулăш ăсталăхĕ 1930-1940 çулсенче хăвăрт аталаннă. Сатирик сивлек геройсене мăшкăл çатми çинче хĕртнĕ, вĕсен сăн-сăпатне ĕненÿллĕ, пурнăçа çывăх кăтартнă. Хăйĕн "Çăл", "Отчет", "Сехре Çимунĕ" калавĕсенче кăмăлсипет енчен сĕмсĕр çынсене питлени яр уççăн курăнса тăрать. Çивĕччĕн тăрăхласа кулнă вăл колхоз ĕçĕнче суя чир тупса кахалланса çÿрекенсенчен /"Пĕри те юлман"/, хут пĕлмесĕр тĕн серепине лекнĕ хĕрарăмсенчен /"Никам та юлман"/.

Вăрçă вăхăтĕнче çырнă "Мăнтăрккапа ырханка" /1941/, "Вырăсла вĕренни" /1941/ калавĕсем вара ирсĕр нимĕç фашисчĕсенчен мăшкăлласа култарнă, совет салтакĕсен паттăрлăхне, тасалăхне кăтартса тăшмана çĕнтерме пулăшнă. "Çыру" ятлă пĕчĕк очеркра автор колхозниксен тылри пурнăçне, вĕсен паттăрлăхне, фронт валли парнесем пухса ăсатнине сăнласа панă.

Чăваш литературинче ял пурнăçĕ çинчен çырнă произведенисем сахалах мар ĕнтĕ, анчах Хветĕр Уярăн калавĕсемпе очеркĕсене вуланă чухне çĕнĕ туйăмсем, çĕнĕ шухăшсем çуралаççĕ, куç умне ытти çыравçă произведенийĕсенче пулман çĕнĕ сăнлă çынсем, чĕрĕ сăнарсем тухса тăраççĕ. Акă "Мускав çулĕ çинче" очеркра Уяр вăрçă хыççăнхи Кольцовка ялĕн кулленхи пурнăçне ÿкерсе панă. Кунта пурте – хуçалăх, культура, çынсен шухăшкăмăлĕ – пуласлăха, çĕннине çул уçать. Проза ăстин очеркĕсене А.Артемьев çыравçă çапла хакланă: "Очерксене лирикăллă туйăм ăшăтать, кашнинчех çемçе юмор сисĕнет. Геройсем уçăмлă курăнаççĕ, вĕсен калаçăвĕшухăшĕ кашнин хăйне евĕрлĕ" /"Ялав", 1951. 6 №. 29-31 С./.

Уярăн повеçсем те нумай. Уйрăмах "Виçĕ кун, виçĕ каç", "Хурапа шурă", "Ăçта çитнĕс?" повеçсене асăнса хăварас килет. Вĕсенче вăл кил-йышри тата юратури тасалăх пирки çырса кăтартнă.

Хветĕр Уяр пĕр вăхăт Кĕнеке палатинче ĕçленĕ терĕмĕр ĕнтĕ. Тĕлĕнмелле пуян кĕнеке, хаçат-журнал тĕнчинче пулнă май вăл халăхăмăр историйĕпе кăсăкланма тытăннă. Çавăн чухне çуралнă та ĕнтĕ унăн пуçĕнче Шурча вăрçи /чăваш хресченĕсен пăлхавĕ/ çинчен роман çырас шухăш. 1952 çулта "Шурча таврашĕнче" романăн пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухнă. Ку – çыравçăн чи пысăк ĕçĕ. Ăна вăл юсаса, çĕнĕ сыпăксем хушса "Таната" ятпа 1964, 1974 çулсенче тепĕр хут кăларнă. Романра автор 1842 çулта Атăл тăрăхĕнчи Шурча ялĕ таврашĕнче кĕрленĕ пысăк пăлхава çутатса панă. "Таната" – хăйне евĕрлĕ историлле роман. Чăваш вулакансем çеç мар, вырăссем те ăна ăшшăн йышăннă.

Вырăс писателĕ Е.Федоров Уяр ĕçне пысăка хурса çапла хакланă: "Сăмахĕсем ун тĕрĕс, сĕтеклĕ те илемлĕ. Сăмах йĕрки шăнăрлă, писĕмлĕ те тулли шухăшлă. Романри ÿкерчĕксем çемçе сăрăпа çуталса тăраççĕ. Сăмах хывăхĕ, çÿп-çапĕ çук. "Таната" роман туйăм тарăнлăхĕпе тата ăсталăх вăйĕпе пирĕн хальхи литературăри чи лайăх произведенисен шутне кĕме тивĕç" /"Коммунизм ялавĕ, 1961, пуш, 16/.

"Таната" тăрăх Хв.Агиверпе А.Васильев çыравçăсем "Шурча таврашĕнче" ятлă драма та çырнă. Ăна çамрăксен театрĕ сцена çинче ăнăçлă лартса панă.

Çыравçăн юлашки пысăк ĕçĕ "Чăвашсем вырăс литературинче тата публицистикинче" ятлă кĕнеке. Вăл икĕ томпа хăй вилсен вырăсла çапăнса тухрĕ. Унăн пĕрремĕш кăларăмне Уяр Иван Мучи çыравçăпа 1946 çулта пичетлесе кăларнă пулнă. Иккĕмĕш кăларăмне кун çути парас тесе автор 50 çул ытла ĕçленĕ. Кĕнекене вырăс çыравçисем, ăсчахĕсем чăвашсем çинчен калакан паха материалсене кĕртнĕ. Шел те, проза ăсти çак куна кураймарĕ. Анчах та унăн хаклă ĕçĕ чăваш халăхĕшĕн калама çук пысăк парне.

Хветĕр Уяр – чăн-чăн сăмах ăсти. Вăл 30 ытла кĕнеке пичетлесе кăларнă. Унăн произведенийĕсене вырăсла, венгрла, тутарла, çармăсла, осетинла тата ытти чĕлхене куçарнă. Хăй те ытти халăх çыравçисен произведенийĕсене куçарас ĕçре сахал мар вăй хунă. А.П.Чеховăн, Д.Беднăйăн, Е.Федоровăн тата ытти писателĕн калавĕсене чăвашла нумай куçарнă.

Федор Ермиловича литература çитĕнĕвĕсемшĕн РСФСР Аслă Совет Президиумĕн, КПСС обкомĕн, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Хисеп грамотисемпе, "Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ", "Чăваш АССР халăх писателĕ" ятсемпе чысланă.

Проза ăстин ĕçĕсем, унăн пултарулăхĕпе ĕç-хĕлĕ çинчен çырнă материалсем Чăваш патшалăх пичет архивĕнче /Кĕнеке палатинче/ тирпейлĕ упранаççĕ.

**Е.АРЛАНОВА,**
**Пичет архивĕн тĕп специалисчĕ.**